**Ĕçе тăваканĕ:** Иванова Валентина Михайловна, Канаш районĕн Сухайкасси тĕп шкулĕнче чăваш чĕлхипе литератури вĕрентекен
**Предмет:** Чăваш литератури
**Шкул:** чăваш шкулĕ
**Ачасен ӳсĕмĕ:** 5-мĕш класс
**Тема (блок) ячĕ:** „Тăван кил – ылтăн сăпка“
**Урок теми: „**Атте-аннене, ватăсене хисеплесси – пирĕн тивĕç“ (Геннадий Волковăн „Ăслă ача“ калавĕ тăрăх, 2-мĕш урок)
**Урок тĕсĕ**: критикăлла шухăшлава, çыхăнуллă пуплеве аталантармалли хутăш урок.

**Урок теми: „Атте-аннене, ватăсене хисеплесси – пирĕн тивĕç“**
**(Геннадий Волковăн «Ăслă ача» калавĕ тăрăх)**

**Урок эпиграфĕ:** Аçу-аннӳне хисепле, хăвнах ырă пулĕ.
*Ваттисен сăмахĕсем*

**1.Харкамлăх (личностные)** (Права, тĕллев, тупсăм, мораль)
а) калаçас, тăнласа ăнкарас, ăнланса вулас енсене аталантарни;
ă) тĕнче литературинче тăван литературăн тӳпи те пысăк пулнине, литература ачасене (вулакана) ăс панине ăнланса илни;
б) илемлĕ хайлава вуласа тухнă хыççăн харпăр хăй шухăшне палăртма пĕлни (хăй вуланă кĕнеке çинчен шухăшланине çирĕплетсе пани)
в) тăван халăхăн авалтан пыракан йăли-йĕркине асра тытасси; атте-аннене, çемьери çынсене хисеплес туйăма аталантарасси.

**2.Предметсен пĕрлĕхлĕ результачĕсем (метапредметные)** (йĕркелӳ, хутшăну, информаци)

**Йĕркелӳ́:** ума лартнă тĕллеве пурнăçлама тухăçлă мелсем суйласа илни; текстпа ĕçлеме, ăнлавсене хак пама, пĕтĕмлетӳ́сем тума пĕлни.

**Хутшăну:** тĕрлĕ мелпе – мăшăррăн, пĕчĕк ушкăнпа, пĕрле килĕштерсе ĕçлеме – пĕрлĕхлĕ ĕçĕн харкам пайне пурнăçлама хăнăхни, харпăр хăйĕн тата ыттисен ĕçне хаклама вĕрентни.

**Информаци:** шухăша пĕтĕмлетсе ăна çыхăнуллă, туллин те тĕрĕс уçса пани; информаци çăл куçĕпе усă курма пултарни (кĕнеке, ИКТ).

**3.Предмета вĕреннин результачĕсем (предметные):** вуланă тата итленĕ хайлава (текста), фильма (видеоролика) хак пама вĕреннине аталантарни; пур пек пĕлӳпе тата хăнăхусемпе усă курса сăнарсене, ăнлавсене хак пани, хăйĕн шухăшне палăртни; И.Я.Яковлевпа Л.Н.Толстой калавĕсенче ĕмĕртен пыракан çирĕп ырă йăла пулнине кăтартни.

**Урокра усă курнă технологисем:** критикăлла шухăшлав технологийĕ, информаципе хутшăну технологийĕ, проблемăллă тата аталантару технологийĕсен еленчĕсем, ушкăнпа хутшăнса ĕçлесси.

**Урокра усă курнă мелсемпе меслетсем:** учитель сăмахĕ, ыйту-хурав, текстпа ĕçлени, видеофрагмент пăхни, тишкерӳ-пĕтĕмлетӳ, Венн унки, танлаштару таблици, эпизодсем тăрăх калаçуирттерни, ансăр-анлă, проблемăллă ыйтусем, илемлĕ вулав, Л.Н.Толстойăн „Старый дед и внучек“ („Ватă старикпе мăнукĕ“) калавĕпе паллашни, танлаштарни, словарь ĕçĕ, ӳкерчĕксемпе ĕçлени, презентаци слайчĕсемпе, карточкăсемпе ĕçлени.

**ИКТ технологийĕ**: мультимедиа презентацийĕ, „Ашшĕ-амăшне ăс пани“ видеофрагмент (китай халăхĕн) пăхни, „Атте-аннене хисепле“ вырăсла видеоролик пăхни.

**Культурăсен çыхăнăвĕ:** Г.Волковăн „Ăслă ача“ калавĕпе Л.Н.Толстойăн „Старый дед и внучек“ („Ватă старикпе мăнукĕ“) калавне танлаштарни.

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** компьютер, мультимедиа проектор, экран, 2 видеоролик: (https://disk.yandex.ru/i/gGhbm5ub2w6LZg) тата (https://disk.yandex.ru/i/Flk5HLjEx_aUtg), магнитсем, Венн ункин схеми, „Культурăсен çыхăнăвĕ“ танлаштару таблици, Л.Н.Толстойăн „Старый дед и внучек“ („Ватă старикпе мăнукĕ“) хайлавĕн тексчĕ, карточкăсем.

## УРОК ЮХĂМĔ

### I . Урока йĕркелени.

*1.Сывлăх сунса класа йĕркелени, ачасен кăмăлне çĕклени, хастар пулма хавхалантарни.*

**Вĕрентекен:** Ырă кун пултăр, ачасем! Эпĕ сире курма питĕ хавас! Кашниннех сăн-пичĕ çутă, куçра хĕлхем çунать. Кăмăлăрсем аван-и?

**Ачасен хуравĕ:** Аван!

**Вĕрентекен:** Маттурсем! Апла паян пĕр-пĕринпе килĕштерсе, туслă ĕçлĕпĕр.

### II. Тĕп тапхăр умĕнхи ĕçсем:

1) **Урокра мĕн çинчен калаçасса прогнозлани.**

**Вĕрентекен:** Ачасем, паянхи урокра эпир мĕн çинчен калаçасса палăртма эпĕ сире видеоролик пăхма сĕнетĕп *(ачасем тимлĕн видеоролик пăхаççĕ* – (https://disk.yandex.ru/i/gGhbm5ub2w6LZg)

*"Пуç мими штурмĕ" (видоролика тишкеретпĕр):*

- Курнă видеороликра миçе сăнар?
- Видеороликра кама-кама кăтарнă?
- Тĕп сăнарĕ кам пулчĕ-ши?
- Çак видеоролик сирĕн чунăрта мĕнле туйăм çуратрĕ? Мĕншĕн?
- Ашшĕ-амăшĕ мĕншĕн хăйсене çапла тытаççĕ?
- Кам вĕсене ăс парать?
- Курнă видеороликăн тĕп шухăшĕ мĕнле-ши?
- Çак видеоролик сире эпир вуланă мĕнле хайлава аса илтерчĕ?

*(ачасен тулли хуравĕсем)*

2) **Урок темипе тĕллевне палăртни.**

**Вĕрентекен:** Çапла, ку видеоролик Г.Волковăн „Ăслă ача“ калав содержанине çывăх. Апла пулсан паянхи урокра эпир мĕнле хайлавпа ĕçлĕпĕр?

**Ачасен хуравĕсем:** Г.Волковăн „Ăслă ача“ калавĕпе.

***1 слайд.*** **Вĕрентекен:** Ачасем, „Ăслă ача“ калавăн тĕп шухăшне аса илер-ха. *(ачасен хуравĕ)* Урок эпиграфĕ валли „Аçу-аннӳне хисепле, хăвнах ырă пулĕ“ ваттисен сăмахне илĕпĕр. Çапла вара, паянхи урок темине пĕрле палăртар-ха. *(ачасем урок темине палăртаççĕ)*

**Инструктаж (ĕç йĕрки).** Клеткăсенче панă сăмахсене çыхăнтарса темăна палăртăр, тетрадь çине çырса хурăр. *(вĕрентекен доска çине çырать)*

| | | |
|---|---|---|
| Атте | пирĕн | хисеплесси |
| ватăсене | аннене | тивĕç |

***2 слайд***. Словарь ĕçĕ: ***ТИВĔÇ.*** Чувашско-русский словарь (1985). 1. долг, обязанность; *салтак тивĕçĕ* – воинский долг, *Тăван çĕр-шыв умĕнчи таса* ***тивĕç*** – священный долг перед родиной; *хисеплĕ* ***тивĕç*** – почетная обязанность; *чи пысăк* ***тивĕç*** – высший долг, этем тивĕçĕ – человеческий долг; *хăвăн тивĕçӳ тесе шутла* – считать своим долгом. 2. Право, основание; *сана çилленме ман тивĕç çук.*3. Достоинство, честь; *тивĕçе ан çухат* – не теряй своего достоинства. 4. Должен, обязан; *вăл сире кĕтсе илме тивĕç.* 5. заслуживающий, достойный чего-л.; *мухтава тивĕçлĕ ентешсем* – достойные славы земляки.

**Вĕрентекен:** Атте, анне – пирĕншĕн çав тери çывăх, ĕмĕр манми сăмахсем. Ăçтан манăн-ха ку сăмахсене?! Вĕсем пире çуратса, юратса ӳстереççĕ, çын тума, пурнăç çулĕ çине кăларма пĕтĕм вăйне параççĕ. Пурнăç урапи хăй çулĕпех кусать. Эпир ӳсетпĕр, тĕрекленетпĕр, атте-аннене вара ытларах та ытларах тимлĕх, пулăшу кирлĕ. Çакă – ача-пăчан чи пысăк тивĕçĕ. Чăваш çемйи мĕн авалтан аслисене, ваттисене хисеплени çинче тытăнса тăнă. Ыр йăлана çирĕп тытса пырасчĕ.

Ватлăх пĕртте савнăç мар.
Темĕн те курма тивет:
Е чир-чĕр ярать тымар,
Е ытти инкек çитет…

***3 слайд*. III. Тĕп тапхăр. (***Мăшăрпа, ушкăнпа ĕçлесси).*

*1. Вĕренӳпе вулав кĕнекинче панă текстпа ĕçлени.*

**Инструктаж (ĕç йĕрки).** 97-98 страницăри “Ăслă ача“ калав тăрăх панă ĕçсене тăвăр:

1-мĕш карточка: „Ăслă ача“ калаври ĕçсен йĕркисене тĕрĕс вырнаçтарăр.

| | | | |
|---|---|---|---|
| 1 | ĕç пуçламăшĕ | А | *ватă çынна ывăлĕпе мăнукĕ çунашкапа лартса кайни, ывăлĕ ăна çырмана тĕксе яни* |
| 2 | ĕç аталанăвĕ | Ă | *ватă çын пурнăçĕ лайăхланни* |
| 3 | ĕç хĕрсе çитнĕ вăхăт | Б | *ватă çын ывăлĕпе тата кинĕпе пурăнни* |
| 4 | ĕç вĕçленĕвĕ | В | *ача çунашкана çырмаран илсе хăпартни, ашшĕне ăслă* |

| | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|
| | | | *сăмахсем каласа шухăшлаттарни, йăнăш тунине ăнланма пулăшни* | | | |
| ХУРАВ | | | А- | Ă- | Б- | В- |

2-мĕш карточка: хайлавпа çыхăннă терминсен тĕрĕс ăнлантарăвне тупăр.

| | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|
| 1 | Хайлав теми | А | *Пурнăçра пулса иртнĕ пĕр-пĕр ĕçе сăнлакан, калăпăшĕ тĕлĕшĕнчен пысăках мар илемлĕ литература хайлавĕ.* | | | |
| 2 | Хайлав тĕп шухăшĕ | Ă | *Илемлĕ литературăра сăнланă этеме, çут çанталăк вăхăчĕсене, пулăмĕсене, илемне, чĕр чунсемпе кайăк-кĕшĕке, хурт-кăпшанка, пĕр-пĕр япалана илемлĕх мелĕсемпе усă курса сăнлани.* | | | |
| 3 | Калав | Б | *Хайлавра кам е мĕн çинчен каласа кăтартни.* | | | |
| 4 | Сăнар | В | *Автор мĕн калас тени.* | | | |
| ХУРАВ | | | А- | Ă- | Б- | В- |

*2. Иртнĕ урокра киле панă суйлавлă виçĕ ĕçе тĕрĕслени.*

**Инструктаж (ĕç йĕрки):** 1) калав тăрăх тунă сюжетлă ӳкерчĕксене ĕçсен йĕркине пăхăнса йĕркипе доска çине тухса çыпăçтарăр;

2) атте-анне, ватă çын çинчен калакан ваттисен сăмахĕсен пĕчĕк пухкăчĕсене ӳкерчĕксем айне магнитсемпе тыттарса тухăр;

3) *Ача* сăмахпа çырнă синквейнсемпе юлташсене паллаштарăр.

***__4 слайд__*. Вĕрентекен:** Атте-аннене хисеплесси çамрăк ăрăвăн тивĕçĕ пулнине палăртни кашни халăхăнах пур. Акă Христос тĕнĕнче Турă Моисей пророка Синей тăвĕ çинче панă 10 вĕрентĕвне аса илер. Моисейăн 5-мĕш вĕрентĕвĕнче «Почитай отца твоего и мать» - «Аçу-аннӳне хисепле» тесе палăртнă.

***__5 слайд__*. __IV. Культурăсен çыхăнăвĕ.__**

**Инструктаж (ĕç йĕрки):** Калава тимлĕ вулăр, шухăшне ăша хывăр.

**Л.Н.Толстой. Сказка «Старый дед и внучек»**

Стал дед очень стар. Ноги у него не ходили, глаза не видели, уши не слышали, зубов не было, И когда он ел, у него текло назад изо рта. Сын и невестка перестали его за стол сажать, а давали ему обедать за печкой.

Снесли ему раз обедать в чашке. Он хотел её подвинуть, да уронил и разбил. Невестка стала бранить старика за то, что он им всё в доме портит и чашки бьёт, и сказала, что теперь она ему будет давать обедать в лоханке. Старик только вздохнул и ничего не сказал.

Сидят раз муж с женой дома и смотрят — сынишка их на полу дощечками играет — что-то слаживает. Отец и спросил: «Что ты это делаешь, Миша?» А Миша и говорит: «Это я, батюшка, лоханку делаю. Когда вы с матушкой стары будете, чтобы вас из этой лоханки кормить».

Муж с женой поглядели друг на друга и заплакали. Им стало стыдно за то, что они так обижали старика; и стали с тех пор сажать его за стол и ухаживать за ним.

***__6 слайд__*.** *Словарь ĕçĕ:* Лоханка ( **ЛОХАНЬ**, -и, ж. 1. Деревянная клепочная посуда круглой или овальной формы, с невысокими краями для различных надобностей (для мытья посуды, стирки белья, для помоев); 2. *диал.* обжора, ненасытная утроба – ***ЛАХХАН*** (таса мар шыв валли йывăçран тунă савăт)

Невестка – кин (ывăлăн арăмĕ); Бранить – вăрçма тытăнчĕ;

Слаживает – йĕркелесе тăвать, ăсталать

***__7 слайд__*. Инструктаж (ĕç йĕрки).** 1. Панă Венн унки мелĕпе усă курса Г.Волковăн «Ăслă ача» калавĕпе Л.Н.Толстойăн «Старый дед и внучек» («Ватă старикпе

мăнукĕ») юмахне танлаштарăр. Пĕрпеклĕхсене палăртакан сăмахсемпе сăмах майлашăвĕсене уйрăм çавракана, пĕрпеклĕхсене ВАРРИНЕ çырăр. 2. «Культура çыхăнăвĕ» таблицăна çырса тултарăр.

**1-мĕш ушкăн валли**




***<u>8 слайд</u>*.** **2-мĕш ушкăн валли**

| **Г.Волковăн «Ăслă ача» калавĕ** | **Л.Н.Толстойăн „Старый дед и внучек“ („Ватă старикпе мăнукĕ“ юмах)** |
|---|---|
| **пĕрпеклĕхсем** | |
| 4 сăнар: ватă старик, ашшĕ-амăшĕ, арçын ача | 4 сăнар: ватă старик, ашшĕ-амăшĕ, арçын ача |
| Тĕп сăнар – ача | Тĕп сăнар – ача |
| Ашшĕ-амăшĕ йăнăш тăвать | Ашшĕ-амăшĕ йăнăш тăвать |
| Ача ватă çынна (ватă ашшĕне) хисеплеме вĕрентет | Ача ватă çынна (ватă ашшĕне) хисеплеме вĕрентет |
| **уйрăмлăхсем** | |
| Хайлав ячĕ – **«Ăслă ача»** | Хайлав ячĕ – **„Ватă старикпе мăнукĕ“** |
| Жанрĕ – калав | Жанрĕ – юмах |
| Ачан ячĕ çук | Ачан ячĕ – Миша |
| Ватă ашшĕне çырмана кайса ярасшăн | Ватă ашшĕне лахханран çитересшĕн |
| Ача çырмаран çунашкана анса илет | Ача ашшĕ-амăшне ватăлсан çитерме лаххан тăвать |

***<u>9 слайд</u>*.** **Инструктаж (ĕç йĕрки).** Икĕ хайлава танлаштарса ансăр-анлă ыйтусем çине хуравлăр.

| **Ансăр ыйтусем** | **Анлă ыйтусем** |
|---|---|
| Икĕ хайлав тăрăх | |
| 1. Ĕçсем ăçта пулса иртеççĕ? *(килте, çемьере)*<br>2. Хăш хайлавра ачан ячĕ пур? *(Л.Толстойăн юмахĕнче – Миша)*<br>3. Кам ватăпа тӳрккес калаçать? *(кинĕ)*<br>4. Хайлавсенче мĕнле ыйту хускатнă? *(ватă ашшĕне хисеплеменни)* | 1. Хăш хайлавра „7-8 çулхи ачи“ тенĕ? *(Г.Волковăн „Ăслă ача“ калавĕнче)*<br>2. Ача ашшĕ-амăшĕн тыткаларăшне курса ырра е усала вĕренет? *(усала)*<br>3. Çак хайлавсем пире ырра е усала вĕрентеççĕ? *(ырра)*<br>4. Çак хайлавсем пире мĕнле пулма вĕрентеççĕ? *(атте-аннене темле пулсан та хисеплесе пăхма)* |

***<u>10 слайд</u>*.** Г.Волковăн «Ăслă ача» калавĕпе Л.Н.Толстойăн «Старый дед и внучек» («Ватă старикпе мăнукĕ») юмахĕнче авторсем мĕнле ыйту хускатнă? *(ачасем хăйсен шухăшне калаççĕ, пĕтĕмлетсе параççĕ)*

Çапла, ватта сума сунни,
Кахалланмасăр пулăшни,
Сĕнӳ-канаш унран ыйтни –
Ак çакă пулĕ чăн пахи.

**Вĕрентекен:** Кашни кил-йышра ваттисем пурах. „Ватти пур та, латти (йĕрке) пур“ теççĕ халăхра. Ĕлĕкрех çемьесем йышлăрах пулнă, тепĕр чухне пĕр килте харăсах тăватă ăру çыннисем пурăннă.

***11 слайд*. Инструктаж (ĕç йĕрки**): слайд çинчи ӳкерчĕксене тимлĕ сăнаса пăхăр та ыйтусем çине хуравлăр:

- Панă ӳкерчĕксенче миçе ăру сăнланнă? Кам-кам?
- Ӳкерчĕксенче миçе халăх çыннисем сăнланнă?
- Ӳкерчĕкри çынсен сăн-пичĕ мĕнле?
- Пĕр ӳкерчĕкĕ ыттисенчен мĕнпе уйрăлса тăрать?
- 4 ӳкерчĕке те пĕрешкел ят пама пулать-и? Мĕнле ят?

**Ачасен хуравĕсем*:*** *(юлашки хурав)* Туслă çемье: асанне-асатте, анне-атте, ача-пăча.

***12 слайд*.** *Суйлав диктанчĕ.* **Инструктаж (ĕç йĕрки**): „Туслă çемьере мĕнле хутшăнусем пулмалла?“ ыйтăва тивĕçтерекен сăмахсене суйласа илсе çырăр. *Туслă çемьере çапла хутшăнусем пулмалла: ...*

*Усă курмалли сăмахсем*: **пĕр-пĕрне ăнланни**, вăрçăнни, **итлени**, алхасни, **хисеплени**, кӳрентерни, **пулăшни**, ăмсанни, **кăмăллăн калаçни**, тавлашни, **канашлани,** харпăр хăйĕншĕн тăрăшни, **пĕр-пĕрне упрани**, итлеменни, **юратни,** харкашни, **хӳтĕлени**, ĕненменни, **каçарни**, суйни.

**Вĕрентекен:** Çапла, ачасем, кашни çемьерех килĕшӳлĕх пултăрччĕ. Туслă çемье – кашни çыннăн хӳтлĕхĕ. Эпĕ сире Геннадий Волковăн „Килти çил-тăман“ калавне итлесе пăхма сĕнетĕп.

***Килти çил-тăман***

Çанталăк сивĕ тăнă. Куç уçма çук çил-тăман вĕçтернĕ. Пĕр çамрăк çын урампа иртсе пынă май пĕрене çинче старик ларнине курах кайнă. Вăл темĕн çинчен шухăшланă пулнă. Çамрăк çын ун патне пырса:

– Мучи, мĕн туса ларатăн урамра çил-тăман вăхăтĕнче? – тесе ыйтнă.

– Эй, ачам, эсĕ пурнăçа чухласа илейместĕн-ха. Тулти çил-тăвăл мĕн вăл?.. Пӳртре вара ывăлпа кин харкашаççĕ, ниçта чарма çук: ку чăнласах та хăрушă çил-тăвăл.

Яланах асту, ачам: тулти çил-тăвăл килтинчен лăпкăрах. Кил-йышра харкашу тухсан çуртран тухса тарас килет. *(Г.Волков)*

**Вĕрентекен:** Г Волков текстĕнче мĕнле шухăша ытарлă каланă? *(ачасен хуравĕсем)*

**V. Кану вăхăчĕ: *(13 слайд)***

**Инструктаж (ĕç йĕрки**): ура çине тăмалла, юлташсемпе вĕрентекен кăтартакан хусканусене туса пымалла.

Ялан кăмăллă пулар, *(пĕр-пĕрин еннелле çаврăнса йăл кулни)*
Пĕр-пĕрне ырă сунар, *(пуç сĕлтсе илни)*

Тус-юлташлă пурăнар. *(пĕр-пĕрне алă пани)*
Ыр йăлана манар мар: *(алăсене малалла, унтан айккинелле)*
Атте-аннене савар, *(алăсене кăкăр умне хĕреслĕ тытса)*
Ваттисене тав тăвар. *(алла кăкăр çине хурса)*
Пиртен курччăр пархатар. *(пуç тайни)*

*Словарь ĕçĕ:* пархатар – благо, добро, благополучие, счастье, польза (ырăлăх, телей, тав туни)

**VI. Пĕтĕмлетӳ тапхăрĕ – ачасен ăнланăвĕпе хăнăхăвне çирĕплетни.**

***14 слайд*. Вĕрентекен:** Çапла, ачасем. Чăваш халăхĕн ĕмĕрсем хушши пыракан ырă йăла, этемĕн чи пысăк тивĕçĕ вăл – ваттисене, атте-аннене хисеплесси; ватăлнă ашшĕ-амăшне хисеплесе пăхасси. Кашни халăхăн çак вĕренӳ яланах пĕлтерĕшлĕ пулнă, пур, пулать те.

**Инструктаж (ĕç йĕрки)**: „Почитай отца и мать“ видеофрагмента пăхса ăша хывăр, хăвăр шухăшăра палăртăр. (https://disk.yandex.ru/i/Flk5HLjEx_aUtg) *(ачасем видеофрагментра курни-илтни урокра паллашнă текстсен, тунă, тишкернĕ ĕçсен шухăшĕпе пĕр кĕвĕллĕ пулнине пĕтĕмлетсе калаçççĕ)*

**VII тапхăр. Рефлекси. *15 слайд*.**

**Вĕрентекен:** Эсир паян урокра ĕçлени мана питĕ килĕшрĕ. Маттурсем. И.Я.Яковлев калашле, килĕштерсе тунă ĕç пысăк усăллă. Сире хастар ĕçленĕшĕн тав тăватăп. **Инструктаж (ĕç йĕрки)**: Сăмах вĕççĕн урокри хăвăр ĕçе, кăмăлăра палăртса шухăшăра пĕр-пĕрне пĕлтерĕр.

| **Урок мана...** | **Урокри хамăн ĕçпе эпĕ...** | **Хам ĕçе хаклани** |
|---|---|---|
| *Хумхантарчĕ* | кăмăллă (е кăмăлсăр | *„5“* |
| *тарăн шухăша ячĕ* | çак ĕçе лайăх (е япăхрах) турăм | *„4“* |
| *тĕлĕнтерчĕ* | çак ĕç ытларах килĕшрĕ (е килĕшмерĕ) | *„3“* |
| *кăмăла кайрĕ* | нимĕн те ĕçлемерĕм | |
| *Хăвăн сăмахусене кала!* | *Хăвăн сăмахусене кала!* | |

**VIII тапхăр. Киле ĕç пани** *(пĕрне суйласа илĕр)* ***16 слайд*.**

1. „Пирĕн туслă çемье“ сăн ӳкерчĕксем туса презентаци йĕркелĕр.
2. „Пирĕн туслă çемье“ сочинени çырăр.
3. Тутар халăхĕн „Виçĕ хĕр“ юмахне вулăр та унăн тĕп шухăшне çывăх чăвашла ваттисен сăмахне палăртăр. *(Аçу-аннӳне хисепле, хăвнах ырă пулĕ)*